Тăвай районĕн хаçачĕ

# ЯЛ ĔÇЧЕНĔ

1935 çулхи февралĕн 17-мĕшĕнче тухма пуçланă

2025 çул

Çĕртме (июнь), 6

ЭРНЕКУН

22/10762/№

Хакĕ ирĕклĕ

## Чăваш Енĕн хисеплĕ çыннисем!

### Сире Раççей кунĕ ячĕпе саламлатăп!



Çак уяв пире хамăрăн аслă кун-çулăмăр çинчен, пирĕн пĕрлехи Тăван çĕршывăмăра чылай ĕмĕрсем хушшинче йĕркеленĕ тата шанчăклăн хӳтĕленĕ халăхсен чун хавалĕпе тачă пĕрлĕхĕ çинчен аса илтерет. Эпир Чăваш Ен Раççейĕн пысăк та туслă çемйи йышĕнче пулнипе, çĕршыв аталанăвĕпе чечекленĕвне хăйĕн тӳпине хывнипе мăнаçланатпăр.

Раççей патшалăхлăхĕ йывăр, синкерлĕ тапхăрсене сахал мар тӳссе ирттернĕ. Анчах та туслă халăх пĕтĕм йывăрлăха яланах çирĕппĕн çĕнтерсе пынă. Мĕншĕн тесен эпир пĕрле пулнă, инкексенче пĕр-пĕрне пулăшнă, тăшмана хирĕç пурте пĕр çын пек кар! тăнă, пĕрлех Тăван çĕршывăмăр чапне ӳстернĕ.

Пуласлăха паян эпир мăн асаттемĕрсен паха ăсĕ çине таянса, йăла-йĕркене, культурăна тата халăхсем хушшинчи килĕшӳлĕхе çирĕплетсе тăватпăр. Пĕрле кăна Эпир Раççее тата та вăйлăрах, Чăваш Ене вара хăтлăрах та ырлăхлăрах тума пултаратпăр.

Сире çирĕп сывлăх, пĕтĕм пуçарурах ăнăçу тата çĕнĕ çитĕнӳсем сунатăп. Пирĕн Тăван çĕршывăмăр яланах çирĕп пĕрлĕхлĕ, тăнăçлă та ырлăхлă пултăр. Пирĕнтен кашниех хамăрăн пĕрлехи аваллăхăмăрпа мăнаçланма тата ыранхи куна шанчăклăн кĕтме пултартăр!

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ**
**Олег НИКОЛАЕВ**

## Социаллă сферăн хисеплĕ ĕçченĕсем тата ветеранĕсем!

### Сире професси уявĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп!



Эсир хăвăрăн пархатарлă ĕçĕрпе пулăшупа тимлĕх тата асăрхав кирлĕ çемьесене пулăшатăр. Эсир ватăпа та, çамрăкпа та пĕр чĕлхе тупса кашнин кăмăлне килме пĕлетĕр. Çакă вĕсене пурнăç савăнăçне, хăйсен вăйĕпе пултарулăхне çирĕппĕн туйма шанчăк кӳрет.

Патшалăх çемьесене пулăшу парассине, амăшлăхпа ачалăха сыхлассине, йăлана кĕнĕ çемье хаклăхĕсене çирĕплетсе пырассине пысăк тимлĕхе хурать.

Округри социаллă пулăшу ĕçĕсен пахалăхĕ лайăхланса пырать. Эсир ватă çынсене, ветерансене, йывăр лару-тăрăва кĕрсе ӳкнĕ çемьесене, ачасене, СВОри ентеш-хӳтĕлевçĕсен çемйисене пулăшатăр, вĕсен ыйтăвĕсене тивĕçтерме тăрăшатăр.

Тавах сире чăтăмлăхăрпа чун ăшшишĕн, ырă кăмăлăршăн.

Пурне те çирĕп сывлăх, хастар кăмăл-туйăм, ырлăхпа телей сунатăп.

## Хаклă ентешсем!

### Сире Раççей кунĕпе саламлатăп!

Тĕрлĕ наци тата тĕн çыннисене патриотизм, туслăх тата Тăван çĕршыва юратнин никĕсĕ çинче пĕрлештерсе тăракан патшалăх уявĕ пулса тăчĕ çак кун. Çакăнпа эпир чăннипех мăнаçланатпăр, ăна çирĕплетме хамăртан мĕн килнине пĕтĕмпех тума тăрăшатпăр.

Тăван çĕршыва юратни пирĕн кулленхи пĕрлехи тухăçлă ĕçре, çитĕнекен ăрушăн тимленинче, хамăрăн муниципалитет округне тата республикăна аталантарма, çĕршыв вăй-хăватне, сыхлăхне ӳстерсе пыма тăрăшнинче яр-уççăн палăрса тăрать.

Пирĕн округ çыннисем мал ĕмĕтпе, хастарлăхпа, пĕрлехи вăйпа çитĕнӳсем тума пултарнипе ят-сумне хăпартаççĕ. Çакă пире малалла çирĕппĕн утма тата çĕнĕ ӳсĕмсемпе çитĕнӳсем тума хавхалантарать.

Тăван кĕтесе, Раççее тата республикăна юратни пире малашне те вăй-хал парса тăтăр, ăнăçусем кӳтĕр.

**Олег ЛОМОНОСОВ,**
**Тăвай муниципалитет округĕн пуçлăхĕ**

ЛУЧШИЕ НА СЕЛЕ

# Ял çамрăкĕсен агрослетĕнче

**Иртнĕ канмалли кунсенче илемлĕ те хăтлă вырăнта, Тăвай округĕнчи «Упа кĕтесĕ» кану базин никĕсĕ çинче, Раççейри чи пысăк мероприятисенчен пĕри – çамрăксен «Ялта чи лайăххисем» IV агрослечĕ иртнĕ. Вăл, «Çĕнтерĕве пĕрле кĕтсе илетпĕр» девизпа иртнĕскер, Чăваш Енри ял çамрăкĕсен 1600 представительне тата пуçласа Атăлçи федераци округĕнчи регионсенчен 70 яхăн хăна пухнă. Çавăн пекех унта ятарлă çар операцийĕн участникĕсемпе ветеранĕсем те активлă хутшăннă.**

Чăваш Ен Пуçлăхĕ Олег Николаев агрослета хутшăннисене саламланă май, мероприяти пĕлтерĕшĕ анлă пулнине палăртнă. «Президентăн Атăлçи федераци округĕнчи полномочиллĕ Представителĕ Игорь Анатольевич Комаров енчен пулăшу пулни, агрослета Атăлçи федераци округĕнчи регионсенчен те çамрăксем тата Пĕтĕм Раççейри çамрăксен «Раççейри ял çамрăкĕсен союзĕ» обществăлла организаци ертӳлĕхĕ те хутшăнни пирĕн пуçарăва çӳлти шайра та ырланине çирĕплетсе парать. Ку вăл пирĕн, ял пурнăçĕн хăйне евĕр философине сарса тата вăйлатса пыма пулăшакан лапама лайăхпа йышăннине кăтартса парать. Проекта тата опыта аталантарсах пырăпăр»,– тенĕ регион ертӳçи.

Экспертсем, общественноçпа влаç представителĕсем хутшăннипе сӳтсе явнă темăсем агрослетăн пĕлтерĕшлĕ уйрăлми пайĕ пулса тăнă. Вĕсем ял территорийĕсене аталантарассипе, çамрăксем вырăнти хăйтытăмлăх ĕçне хутшăнассипе, çĕршыв аталанăвне, патриотла воспитани парассипе, çемьесен хаклăхĕсене упрассипе тата малалла вăйлатса пырассипе, ялти пурнăç йĕркине социаллă сетьсем урлă сарассипе çыхăннă чи актуаллă проблемăсене пырса тивеççĕ.

**(Вĕçĕ. 2-мĕш стр.)**

## Июнĕн 12-мĕшĕнче – «Акатуй-2025» ĕçпе юрă тата спорт уявĕ



***9.00 сехетрен*** *– суту-илӳ ярмăркки, ачасем валли аттракционсем;*
***9.00 сехетрен*** *– хăна картишĕсене кăтартни;*
***10.00 сехетрен*** *– декораципе прикладной искусство тата халăх промыслисен изделийĕсен курав-ярмăркки;*
***10.00 сехетрен*** *– Тăвай округĕнчи ачасен коллективĕсен пултарулăхне кăтартни;*
***11.00 сехетрен*** *– уява савăнăçлăн уçни;*
***11.00 сехетрен*** *– спорт ăмăртăвĕсем: футбол, волейбол, шашка, армрестлинг, кире пуканĕн спорчĕ, самбо тата Кĕрешӳ.*
***12.00 сехетрен*** *– Тăвай округĕнчи пултарулăх коллективĕсен концерчĕ.*
***20.30 сехетре*** *– Шупашкарти чăваш эстрада çăлтăрĕсен концерчĕ (Алена Выйгетова, Константин Рязанов, Андрей Думилин, Виталий Иванов, Михаил Федоров).*

**Пурне те уява йыхравлатпăр!**




## Хисеплĕ вулакансем!

**«Ял ĕçченĕ» хаçата 2025 çулхи иккĕмĕш çур çулшăн çырăнтарасси малалла пырать.**
**Ăна почта çыхăнăвĕн уйрăмĕсем урлă 6 уйăхлăха илсе тăмашкăн 675 тенкĕ те 96 пус тӳлемелле.**
**Альтернативлă йĕркепе редакцие килсе е кооператорсен магазинĕсем урлă çур çуллăха çырăнмалли хак – 360 тенкĕ.**

## РЕСПУБЛИКĂРА, ОКРУГРА

- Майăн 27-мĕшĕнче чăваш тĕнчи паллă культура деятелĕ, чăваш литературин классикĕ Константин Иванов çуралнăранпа 135 çул çитнине уявларĕ. Паллă юбилее халалласа К.В.Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕ Константин Иванов кунне уçнă. Чăваш Ен Пуçлăхĕ Олег Николаев сăвăç палăкĕ умне чечек хунă. Константин Иванов пултарулăхĕ – чăваш халăхĕн чун-чĕрин тĕкĕрĕ, тенĕ Олег Николаев. Вилĕмсĕр «Нарспи» поэма – чăваш халăхĕн чи пысăк пуянлăхĕ. Паян ăна чăвашла кăна мар, вун-вун чĕлхепе вулаççĕ.
- ЧР Министрсен Кабинечĕн черетлĕ ларăвĕнче регионăн амăшĕн капиталне 2030 çулхи декабрĕн 31-мĕшĕнчен тăсассипе çыхăннă проекта ырласа йышăннă. Чăваш Енре унăн виçине 2025 çулхи январĕн 1-мĕшĕнче 200 пин тенке çитернĕ. 2012 çултанпа Чăваш Енри 17 пин ытла çемье 1547,4 миллион тенкĕ илнĕ. Унăн пысăк пайĕпе çурт-йĕре лайăхлатма усă курнă. Ачисене вĕрентме тăкакланисем те, автомобиль туяннисем те пур.
- Пирĕнпе кӳршĕллĕ Вăрмар округĕнчи Кĕтеснер ялĕнче савăнăçлă лару-тăрура чикĕ хуралçисен аллейине уçнă. Çак ятпа пухăннисене округ пуçлăхĕ Василий Шигильдеев, Вăрмар округĕн депутачĕ, пограничниксен вырăнти пĕрлĕхĕн ертӳçи Герман Боредский ветеран саламланă.
- Библиотека ĕçченĕн кунĕнче вара Шупашкар округĕнчи Паçпак ялĕнче çĕнелнĕ библиотека алăкĕсене яриех уçнă. Çĕнелнĕ вулавăшра ачасемпе аслисене кĕнеке вулама кăна мар, пĕр-пĕринпе хутшăнма, пĕлĕве ӳстерме, пултарулăха аталантарма пулĕ. Çак ятпа Паçпаксене Шупашкар округĕн пуçлăхĕ Владимир Михайлов саламласа ăнăçусем суннă.
- Чăваш Енре кăçал 818 пин тăваткал метр пурăнмалли вырăн хута яма палăртнă. Январь-апрель уйăхĕсенче 367,2 пин тăваткал метр тунă. Ку вăл çулталăк планĕн 45 проценчĕпе танлашать. Çурт-йĕр строительстви енĕпе Шупашкар хули, Шупашкарпа Канаш округĕсем малта. Чăваш Ен Пуçлăхĕ 2030 çул тĕлне пурăнмалли вырăн çуллен 1,15 миллион тăваткал метр тăвассине пурнăçа кĕртме тĕллев лартнă.
- Республика Пуçлăхĕн хĕл каçнă хыççăн çулсене норматива тивĕçтерес пирки Транспортпа çул-йĕр хуçалăхĕн министерствине тата муниципалитет органĕсене çитернĕ хушăвне пурнăçласа пирĕн Тăвай округĕнче те çулсене «Пурнăç инфратытăмĕ» нацпроектпа килĕшӳллĕн пăхса-юсаса тăма тимлеççĕ.
- Аграрисене пулăшмалли майсенчен пĕри – 2021 çултанпа вăйра тăракан «Перспектива» грант. Ку таранччен унпа усă курса 77 фермер, уйрăм предприниматель тата организаци 458 миллион тенкĕ илнĕ. Çак шутра пирĕн округра та сыр тата ытти ял хуçалăх продукцийĕ туса кăларассине йĕркелесе янă. Кăçал «Перспектива» гранта çырла туса илекенсене, усă вырăнта пахча çимĕç ӳстерекенсене (севоксăр пуçне), агротуристсене канма условисемпе тивĕçтерекенсене параççĕ. Грант илес тĕллев тытнисен бизнес проекчĕ хатĕрлемелле, заяка тăратса Ял хуçалăх министерстви ирттерекен конкурса хутшăнмалла.

**Иван ГЛАДКОВ хатĕрленĕ**

# Ял çамрăкĕсен агрослетĕнче




**Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр.**

Чăваш Ен Пуçлăхĕ Олег Николаев «Çĕнтерĕве пĕрле кĕтсе илетпĕр» дискусси лапамне те хутшăннă, ку чухнехи общество пурнăçĕнче Аслă Отечественнăй вăрçăри пулăмсем тата паттăрсем çинчен калакан историллĕ астăвăма чыслăн упраса усрани мĕн тери кирлĕ пулнине аса илтернĕ «Эпир Тăван çĕршыв вăрçин историне, Аслă Çĕнтерĕве мĕнле тунине лайăх пĕлетпĕр. Пирĕн аттесемпе асаттесем хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнă, çын тума пултарайманнине тунă. Пирĕн çакна асра тытнипе пĕрлех Çĕнтерӳ пĕлтерĕшне кăна мар, ăна мĕнле хакпа туптанине те ăнланса илмелле. Кăçал агрослетра кашни муниципалитет Аслă Çĕнтерĕве хăйсем мĕнле тӳпе хывнине каласа пачĕ. СВО салтакĕсемпе ветеранĕсем агрослета хутшăнни те мир, тăнăçлăх хаклăхне асра тытма хавхалантарать»,– палăртнă Олег Николаев.

«Агропродакшн: мĕнле майпа ялти паллă блогер пулмалла» дискусси лапамне нумай çамрăк хутшăннă, вăл агрослетăн чи кăмăлланă вырăнĕсенчен пĕри пулса тăнă.

Кирилл Степанов, çамрăк фермер, ял тематикипе иртternĕ Пĕтĕм Раççейри «Манăн çĕр – Раççей» информаци проекчĕсен Наци премийĕн çĕнтерӳçи Олег Николаевран республикăри ялсем тăрăх йĕркелекен турист маршручĕсен актуаллăхĕ пирки кăсăкланнă. «Эпĕ асăннă маршрутсемпе çул çӳреме кăмăллатăп. Малтан эпĕ ăна ертӳçĕ пек тест тăватăп, унтан канмалли кунсенче вăхăта интереслĕ ирттерме çемьепе пĕрле çула тухатăп»,– тенĕ вăл.

Чăваш Ен ертӳçи çамрăк специалистсене пулăшасси, ял хуçалăхне тата ял туризмне аталантарасси регион правительствин тĕп проекчĕсем пулса тăнине, çакă ял тата отрасль вăй-хăватне ӳсса кăтартассипе çыхăннине палăртнă.

Йăлана кĕнĕ тăрăх, агрослет программипе килĕшӳллĕн унта хутшăннисен парачĕ, ял çамрăкĕсен спартакиади, квадроциклсемпе фигурăсем туса ăмăртасси тата çавăн пекех пулă шӳрпи пĕçерессипе кулинари тупăшăвĕ иртнĕ. Пулă шӳрпи пĕçерекенсен ăмăртăвĕнче Муркашсем мала тухнă.

Ял çамрăкĕсен спартакиадинче Тăвай округĕн командине çитекен пулман. Пултарулăх ăмăртăвне Аслă Çĕнтерĕве халалланă. Ушкăнсем юрланă, ташланă, чуна витермелли сăвăсем вуланă. Чи маттуррисем – Çĕмĕрле командин артисчĕсем.

Тăваттăмĕш агрослета Атăлçи федераци округĕн мĕнпур регионĕ хутшăннă.

Çакна та палăртса хăвармалла: хальхи вăхăтра Чăваш Енре йĕркелесе ирттерекен «Ялта чи лайăххисем» агрослетсенче яла пулăшассипе тата туризма аталантарассипе тăратнă сĕнӳсем Чăваш Республикин Ял хуçалăх министерствин программисенче ăнăçлă пурнăçа кĕрĕççĕ. Уйрăммăн илсен, 2022 çулта агрослетра «АгроАстăвăм» проекта презентациленĕ пулнă. Унта Чăваш Енри ялсенче пурăнакансен Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнчи паттăрлăхне кăтартса панă. Проект картинче «Ял паттăрлăхĕ: фронта, Тăван çĕршыва, Çĕнтерĕве!» мобильлĕ фотокурав туса хатĕрленĕ. Çак пуçару паян кун та вăйра. Çавăн пекех Чăваш Ен Ял хуçалăх министерстви агротуризмпа çыхăннă проектсене те активлă пурнăçа кĕртет, регионта ял туризмне аталантарма хаклăхĕпе 10 миллион таран грантсем парать. Иртнĕ çулта патшалăх пулăшăвĕпе 59 миллион тенкĕлĕх çичĕ проект туса хатĕрленĕ, кунта Чăваш Енри пĕр муниципалитет округĕсенчи туризм базисене, агротуризм комплексĕсене тата фермăсене явăçтарнă. Пилĕк проектне пурнăçа кĕртни паллă, ытти иккĕшне кăçал пурнăçлаççĕ.

Агрослет итогĕсемпе тата вĕсемпе çыхăннă пуçарусемпе Чăваш Енре пуçару бюджечĕ активлă пурнăçа кĕрет: юлашки 5 çул хушшинче 5,8 миллиард тенкĕлĕх 5200 ытла проекта пурнăçа кĕртнĕ. Çакă вăл ялсенче пурăнакансен, вĕсен шутĕнче çамрăксем те, ялсен пурнăçне лайăхлатма хастар хутшăннине çирĕплетсе парать. 2025 çулта конкурслă майпа 3,3 миллиард тенкĕлĕх 1555 проекта пурнăçа кĕртме суйласа илнĕ, çак шутра пирĕн Тăвай округĕпе – 93 проекта. Асăннă проектсем инфраструктура тата инвестиции енĕсене тĕпе хураççĕ, ялсен территорийĕсене комплекслă аталантарма ырă витĕм кӳреççĕ.

**Иван ИВАНОВ**








## Йĕркелӳ комитечĕн черетлĕ ларăвĕ

**Тăвайра июнĕн 12-мĕшĕнче Акатуй пуласси çинчен «Ял ĕçченĕ» хаçатăн иртнĕ номерĕнче пĕлтернĕччĕ ĕнтĕ – вăл халиччен пекех спорткомплекс территорийĕнче иртет.**

Çавна май ăна хатĕрленсе тата мĕн-мĕн туса çитермеллине йĕркелӳ комитечĕн вырăна тухса иртternĕ черетлĕ ларăвĕнче сӳтсе явнă. Ларăва округ пуçлăхĕ Олег Ломоносов ертсе пынă.

**Хамăр инф**

ПУÇАРУ ПРОЕКЧĔ

## Часах урам çуталĕ

**Тăвайри Строительнăй урамĕпе халиччен транспорт тавраш кирпĕч завочĕ, МСО «Янтиковская» организаци, районти хатĕрлев кантурĕ, автозаправка еннелле кусатчĕ. Халĕ çынсенчен ытларахăшĕ дачăсем еннеллеваскать: çуран та, мотоблок таврашĕпе те, ыттипе те. Автоçул хĕррипе çăка, тирек, ытти йывăç ӳссе ватăлнă, вăйлă çил тухсан турачĕсене хуçса йĕри-тавра сапалатчĕ.**

Америка вĕрени те сырса илнĕ çулăн пĕр енне. Çакăнти вырăна тирпейлессипе çыхăннă ĕçе пуçарулла бюджет проекчĕпе пурнăçлама пуçланă пуш уйăхĕнче.

Тăвай территори уйрăмĕн пуçлăхĕпе Николай Сормовпа çывăхри юшкăнпа тулнă кӳлĕ-пĕвене висĕмçул тасатни, пĕлтĕр çăвĕпех шыв тулли тăрса савăнтарни çинчен сăмах хускатрăм. Дача хуçисем тав тăваççĕ проекта ĕçе кĕртме пулăшакансене.

Дачăсем еннелле пăрăнакан çул тĕлĕнчи çуран тата транспортпа çӳрекенсемшĕн хăрушлăх кăларса тăратакан йывăçсене каснă, турачĕсене иртнĕ. Çӳрев хăрушсăрлăхĕшĕн тимлесе татах та касмалла-ха. Çакăн çинчен Николай Ивановича çынсен шухăшне пĕлтертĕм. Пĕр пуçăннă ĕçе пахалăхлах вĕçлесчĕ. Тепре таврăнмалла ан пултăр.

Çул айккипе çĕнĕрен юпасем лартнă, часах ку урамра та электричество ламписем çуталĕç. Çул çинчи шăтăкпутăксене юсаса тӳрлетнĕ. Апла пĕчĕк урамсем те влаç органĕсен тимлĕхĕнчех. 2024 çулта Тăвай территори уйрăмĕнчи ялсенче çынсен пурнăçне лайăхлатассипе чылай ĕç тунă, пуçару бюджечĕн программипе 28 проект ĕçе кĕртнĕ. Кăçал палăртнă ĕçсенчен çуррине пурнăçланă ĕнтĕ, çав шутра нумаях пулмасть Тăвайри Ленин урамĕнчи çутă тытăмне çĕнетнĕ. Тăвайри вăтам шкулти акт залĕ валли 620 пин тенкĕлĕх çемçе пукансем туяннă. Унсăр пуçне шкул котельнăйне çĕнĕ хуран вырнаçтарасшăн.

**Раиса ШУМОВА**

# Тăхăрвунă çул тултарнă ятпа

**Тенеялĕнчи Валентина Петровна Николаева ячĕпе Раççей Президенчĕн Владимир Путинăн Тав çырăвĕ килнĕ. Çак кунсенче 90 çулхи юбилейĕпе ăна çывăх çыннисем, ялйыш саламланă.**



Тăвай округĕн пуçлăхĕ Олег Ломоносов, Йăнтăрчă ял территорийĕн уйрăмĕн ертÿçи Александр Карсаков ĕç ветеранне, тыл ĕçченне ырă сывлăх, вăрăм ĕмĕр, иксĕлми вăйхăват суннă, асăнмалăх парнепе савăнтарнă.

Валентина Петровна Тенеялĕнче кун çути курнă, кунтах çемьеленнĕ. Пурнăçне шут ĕçĕпе çыхăнтарса нумай çул Тушкилте бухгалтерта тăрăшнă. Унтан «Новый путь» колхозра кассирта та, çав вăхăтрах страхлакан агентра та вăй хунă. Хуçалăхри ытти ĕç-хĕле хутшăнса тăван ен аталанăвне пысăк тÿпе хывнă.

Кĕçĕн ывăлĕн çемйипе пурăнать Валентина Петровна. Йывăрлăхсем умĕнче парăнакан йышши мар вăл. «Хускални сывлăхшăн усăллă»,– тет. Кутамкка çакса, туя çине тайăнса лавккана хăех кайса килет, мĕн кирлине туянать. Яланах халăх хушшинче пулма хăнăхнăран, паллакансене тĕл пулать, калаçать, ырă хыпарсемпе хавхаланать. 4 мăнукĕпе, 5 кĕçĕн мăнукĕпе савăнать, вĕсене хăйĕн юратăвне парнелет.

Валентина Петровна хăнасене ырă çул, вăрăм кун-çул сунса ăшшăн ăсатрĕ. Хăйне çавăн пек сума сунăшăн тав турĕ, ĕçре ăнăçу сунчĕ.

**Алевтина УСЬКИНА,**
**Йăнтăрчă ял территори уйрăмĕн специалисчĕ**

# Тĕрленĕ картта музейĕ

**Шупашкарта Хĕрлĕ тÿремре Раççейĕн тĕрленĕ карттин музейĕ уçăлнă.**

«Тĕрленĕ картта Раççей пĕрлĕхне, нумай енлĕхне кăтартать. Эпир аслă, мăнаçлă, истори енчен пуян çĕршывра пурăннине çирĕплетет. Раççей Президенчĕ Владимир Путин чĕнсе калалă пек çĕршыва инфратытăм кăна мар, пĕрлехи культурăри çĕнĕлĕхсемпе те «çĕлемелле»,– палăртнă ЧР Пуçлăхĕ Олег Николаев.

Аса илтеретпĕр, Раççейĕн тĕрленĕ карттине тума пĕтĕм çĕршыв хутшăннă. 350 ытла тĕрĕ ăсти хăйĕн тÿпине хывнă. Карттăна 2022 çулта пĕрлешнĕ çĕнĕ регионсене те кĕртнĕ. Картта Пĕтĕм тĕнчери «Раççей» выставкăна хутшăннă. Тĕрленĕ картта ытти пуçарăва та çул панă. Çĕртме уйăхĕн 24-мĕшĕнче Республика кунĕнче «Инносоциум» фонд Шупашкарта «Раççей кунĕ. Атăлçи тăрăхĕ» фестиваль йĕркелĕ. Унта «Раççейĕн халăхи йышши музыка картти» Пĕтĕм Раççейри проектăн пĕрремĕш концерчĕсем иртĕç.

Тĕрленĕ картта музейĕ Раççейре пĕртен-пĕрре. Вăл тĕрлĕ халăхсен культурипе паллашма май парать.

# Федоровсем хÿтĕлĕç

**Тăвайри тĕп библиотека никĕсĕ çинче перекетсемпе инвестицисен Пĕтĕм Раççейри çемье фестивалĕн муниципалитет тапхăрĕ иртнĕ. Программăри висĕ енлĕ тупăшура пултарулăхне кăтартнă çемьесем. Конкурса ашшĕпе амăшĕ тата 15 çултан аслăрах ачи, пурĕ 5 çемье хутшăннă: Федоровсем, Абрамовсем, Рафиевсем, Петровсем тата Матросовсем.**

Мероприяти туслă та савăнăçлă лару-тăрура иртнĕ. Кашни тупăшу хыççăн экспертсем усăллă комментарисем, ăнлантарусем панă. Тăвайри Перекет банкĕн ертÿçи Александр Краснов ачасене ултавçăсенчен сыхлас ыйтăва хускатнă.

Конкурс пĕтĕмлетĕвĕсем тăрăх Федоровсен çемйи – Алексей Владимировичпа Наталья Юрьевна тата вĕсен хĕрĕ Анна – çĕнтернĕ. Вĕсем çĕртме уйăхĕн 21-мĕшĕнче Канашри финанспа экономика колледжĕн никĕсĕ çинче иртекен регион тапхăрĕнче Тăвай округĕн ячĕне хÿтĕлĕç.

Çĕнтерÿçĕсене çитĕнÿсем сунатпăр!

**Раиса ВАСИЛЬЕВА**

# Ветерансене те, çамрăк армеецсене те чысланă

**«Тăвай округĕн чăн-чăн патриочĕсем»,– тесе калас килет «Пограничниксен тăванлăхĕ» общество организацийĕн Тăвайри пĕрлĕхĕ çинчен. Тĕрлĕ çулсенче служба тивĕçĕсене чыслăн пурнăçланисем халăхи вăхăтра муниципалитетра йĕркелекен мероприятисене анлăн хутшăнаççĕ, çамрăк ăрăва патриотла воспитани парса ÿстерес ĕçе пысăк тÿпе хываççĕ.**



Пĕрлĕхĕн округри ертÿçи, право хуралĕн ветеранĕ, хисеплĕ судья Геннадий Андреевич Николаев пограничниксен кунĕнчи чыслав саманчĕсемпе паллаштарчĕ. Тĕмерпе Нÿшкасси ялĕсенче пограничниксен юписем вырнаçтарнине палăртса хăварчĕ.

– Чăваш АССР тата РСФСР тава тивĕçлĕ учительне, Тăвай округĕн хисеплĕ гражданинне Альфред Пимулина «За патриотическое воспитание подрастающего поколения» общество медалĕпе чысланă. Вăл кире пуканĕ йăтассипе Раççей Федерацийĕн чемпионĕ пулнă. Йывăр атлетикăпа темиçе хутчен палăрнă. Пултаруллă спортсменсем хатĕрлессипе ырми-канми ĕçленĕ. Альфред Александрович ертсе пынипе Тăвайсен «Орленок», «Зарница» командисем çарпа спорт вăййисенчен çĕнтерÿпе таврăннă.

«Çав вăхăтри кубоксемпе дипломсем шкулта упранаççĕ,– тенĕ наградăпа саламланă тата ырлăх-сывлăх суннă май шкул директорĕпе унăн çумĕ Евгений Моряковпа Надежда Михайлова. – Унăн вĕренекенĕсем çавăн пекех пăшалтан перессипе те, спортăн ытти енĕпе те çитĕнÿсем тунă. Наставникĕн ырă ĕçĕсене малалла тăсса халĕ хăйсем ăста тренер-преподавательсем, вĕрентекенсем пулса тăчĕç. Хăшĕсем хамăр тăрăхрах вăй хураççĕ».

Тăвай округĕн пуçлăхĕн çамрăксен ыйтăвĕсемпе ĕçлекен советникĕ Светлана Николаева ветеран-пограничниксене Çĕнтерÿ парадне активлă хутшăннăшăн администраци пуçлăхĕн Тав çырăвне панă. Çавăн пекех Нÿшкасси ялĕнче пограничник юпине уçас ĕçри пуçарушăн В.Г.Антонова, В.Н.Моисеева, Н.К.Семенова, Г.В.Гурьева Тав тунипе чысланă.

Çав кун чикĕ хуралĕн ветеранĕсем 5 ялта пулса пограничниксен юписен умĕнче митингсем йĕркеленĕ. Çамрăк армеецсен пĕр ушкăнĕ «За отличие – юный друг пограничников» общество медальне тивĕç пулнă. Çав шутра – Тăрмăшри кадет класĕсен командирĕсем Николай Петровпа Евгений Павлов. Çавăн пекех асăннă медальсемпе Виталий Ильина (Тĕмер шкулĕ), Елисей Петрова (Тăрмăш) тата Семен Сергеева (Тăвай шкулĕ) чысланă.

«Активлă вăрăм ĕмĕр» центрăн членĕсем, кĕмĕл волонтерсем, ветерансен «Надежда» ансамблĕн юрăçисем Римма Павловна Маркова, Галина Матвеевна Маковей, Полина Михайловна Иванова ветерансен юхăмĕн ĕçĕнчи пуçарулăхпа хастарлăхшăн пограничниксен пĕрлĕхĕн медальне тивĕç пулнă.

**Раиса ШУМОВА хатĕрленĕ**

# Уяв кунĕнче – мини-футбол

**Ачасене хÿтĕлемелли Пĕтĕм тĕнчери кун Тăвайри РТП территорийĕнчи стадион ирех хаваслă сасăсемпе тулчĕ. Çак çутă уявпа ачасене, вĕсен ашшĕ-амăшĕсене муниципалитет округĕн пуçлăхĕ Олег Ломоносов, вĕрентÿ пайĕн начальникĕ Ирина Семенова, десантниксен уйрăмĕн ветеранĕ Эдуард Буинцев саламларĕç, çирĕп сывлăх, ăнăçу, телейпе юрату сунчĕç.**



Гимн кĕввипе çамрăк спортсменсем Раççей ялавне илсе тухрĕç. Çакăн хыççăн усă пĕлĕт айĕнче чăн-чăн спорт тытăçăвĕ пуçланчĕ. «РТП», «СХТ» тата «Проспект» командăсем мини-фубол турнирĕнче мала тухассишĕн ăмăртрĕç. Юнашарах ашшĕ-амăшĕ, юлташĕсем, çывăх тăванĕсем хĕрÿллĕн хавхалантарни, паллах, вăй-хал парса тăчĕ. Ăмăрту хыççăн командăсене призсемпе чысларĕç.

Çак праçнике йĕркелекенсене тав турĕç пухăннисем. Уйрăмах унăн пуçаруçи – Семен Буинцев çамрăк футболист ячĕпе ăшă сăмахсем каларĕç.

Ачасен çуллахи каникул пуçланчĕ. Картиш территорийĕнче çакăн пек спорт мероприятийĕсем ирттерни питех те усăллă.

**Татьяна ЛЕОНТЬЕВА,**
**Тăвай ялĕ**

# Манăн ял - манăн тăван кил

Проект Чăваш Республикин цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин пулăшăвĕпе пурнăça кĕрсе пырать

# Ăраскалне ялта туптать

**Тăван ял, тăван кĕтес, Тăван çĕршыв çинчен ăшшăн та хавхаланса çырман поэт-писатель, художник çук та пулĕ. Вĕсем çеç-и? Хамăр та, пĕчĕккĕ чухне, алла ручка е кăранташ тытнă-тытман пӳрт-çурт ӳкерме, ун тавра йывăçсем лартса тухма хăтланнă. Çуралнă килтен, тăван ялтан, анне-аттерен çывăххи мĕн пултăр. Тен, пурте пулмасан та, нумайăшĕ тăван ял, тăван кил ăшшине ĕмĕрлĕхе чунра упрать, ĕçĕпе е шухăшĕпе хĕмленсе те пулса уншăн тунсăхлать тата тăрăшать.**

Çаксем пурте пархатарлă. Юлашки çулсенче вара ялшăн, тăван еншĕн тăрăшма çĕнĕ майсем усăлчĕç – Чăваш Енре 2017 çултанпа ялсенчи обществăлла инфраструктурăна е, ансат чĕлхепе каласан, вырăнти пурнăçа лайăхлатма пуçару бюджечĕн программи нумайлăха «прописка» илчĕ. Асăннă программа проекчĕсене пурнăça кĕртме вырăнти халăх, ялсенче пурăнакансем хăйсем те хутшăнни, пĕрлехи ĕçсене влаç органĕсемпе пĕрле килĕшсе туни ялсен сăн-сăпатне тата хăтлăхне нумай улăштарчĕ, çĕнетрĕ, пурнăçа аванлатрĕ. Çакна эпĕ хамăр районти чылай ял тĕслĕхĕпе çирĕплетсе пама пултаратăп.

Çапах та чи малтанах çынсем – çав ялсенче пурăнакансем хăйсен ялĕн хăтлăх хуçисем пулса тăни паха. Нимĕн те хăй тĕллĕн пулмасть. Ку тĕлĕшпе эпĕ 2016 çултанпа Çĕнĕ Пуянкасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕнче ĕçленĕ, хальхи вăхăтра ИП йĕркелесе предпринимательте тăрăшакан Çĕнĕ Пуянкасси ялĕн çамрăкне Станислав Олегович Данилова ырăпа асăннă пулăттăм. Акă мĕнле çырса кăтартнă ун пирки темиçе çул каялла «Ял ĕçченĕ» хаçата янă çырăвĕнче Çĕнĕ Пуянкассинчи вăтам шкулта нумайранпа чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен Эльвира Николаевна Кириллова: «Йывăр лава туртма çăмăл мар. Апла пулин те хăшĕ-пĕри çав йывăрлăхран хăрамасть. Ун пеккисен шутне эпĕ Çĕнĕ Пуянкассинче çуралса ӳснĕ, вырăнти ял тăрăхĕн пуçлăхĕнче ĕçлекен Станислав Олегович Данилова пĕр тунмасăр кĕртнĕ пулăттăм. Вăл ялти шкула лайăх палласемпе вĕренсе пĕтернĕ, аслă пĕлӳ илнĕ, экономист. Çемьере виçĕ ывăлтан чи кĕçĕнни Станислав, арçын ĕçне мĕн пĕчĕкрен хăнăхса ӳснĕ. Çавăнпах пулĕ вăл нимĕнле ĕçрен те хăраса тăмасть, çамрăк вăйхалĕпе чупса ĕçлет». Малалла вăл статьяра С.Данилов ял хитрелĕхĕшĕн, пуласлăхĕшĕн нумай тăрăшнине палăртать, çак ĕçсене хăйĕн тĕслĕхĕпе ял хастарĕсене явăçтарнине те кăтартса парать. «Станислав Олегович сăмах пачĕ пулсан, çав ĕçе яланах пурнăça кĕртме тăрăшать, хăш-пĕр чиновниксем пек, сăмаха çилпе вĕçтермест. Акă, икĕ ял хушшинчи кану паркĕнче вăрçăра çапăçнисене асăнса мемориал туса лартрĕç (сăмах майăн каласан, районта чи чаплисенчен пĕри вăл), ача-пăча лапамĕ йĕркелерĕç. Сахалтан та чĕрĕк ĕмĕр каялла тасатма палăртнă Кивĕ Пуянкассинчи Тавăш кӳллипе Çĕнĕ Пуянкассинчи шкул çумĕнчи кӳлле тасатма пултарчĕç. Халĕ вĕсенче хур-кăвакал ыр курса савăнать. Ялти культура çуртĕнче те тĕп юсав ĕçĕсем тунă. Ял урамĕсенче вак чул сарса хытарнă çулсем çулран-çул хушăнса пыраççĕ. Çĕнĕ тата Кивĕ Пуянкасси ялĕсен масарĕсем çинче йĕпе-сапара, сивĕре кĕрсе хӳтлĕх тупмалли çĕнĕ пӳртсем хута каяççĕ. Ялсенче ĕçмелли шыв çулĕсенче авари таврашĕ пулсан кĕске хушăрах юсама тăрăшаççĕ. Хĕлле ял урамĕсенчи çулсене юр хӳсе лартсан та вăхăтра тасатса тăраççĕ. Тата куçа курăнман ытти ĕçсем те питĕ нумай, вĕсене те тимлĕхре тытать»,– çапла хак панă Станислав Даниловăн пуçарулăхне тата ĕçне-хĕлне пилĕк çул каяллах Эльвира Николаевна Кириллова. Сăмах майăн каласан, вăл хăй те вĕрентӳ ĕçĕнче пысăк хисепе тивĕçнĕ учитель. Çавăнпах пулĕ ыттисене те ĕçне тата тăрăшулăхне кура хаклать.

Çĕнĕ Пуянкасси территори уйрăмĕнчи икĕ ялта пурĕ 350 çемьене яхăн пурăнать. Пӳрт-çуртсене, хуралтăсене лайăхлатсах, çĕнетсех пыраççĕ ялсенче пурăнакансем. Çĕнĕ çурт-йĕр çавăракансем те пур. Çакăнпа пĕрлех ялсене йывăç-тĕм лартса та симĕслетеççĕ. Ялсен сăн-сăпачĕ улшăнса, урамсем хытă сийлĕ çулйĕрпе йĕркеленсе пынă май, вĕсенче тĕпленсе пурăнма кăмăл тăвакансен йышĕ те çирĕпленсе е хушăнса пырасса шанма пулать. Урамсем такăр, газ çунать, ĕçмелли шыв пур – çаксем ялта пурăнаканшăн питĕ кирлĕ условисем пулса тăраççĕ-çке. Станислав Данилов та çав шутлă. – Пĕрре те хулара пурăнас килмест, ял пурнăçнех кăмăллатăп. Юратнă ĕç вăй-хăват парать тейĕн, ялта вăхăт иртнине те сисместĕп,– тет вăл пĕр хăпартланмасăр.



**– Пĕрре те хулара пурăнас килмест, ял пурнăçнех кăмăллатăп. Юратнă ĕç вăй-хăват парать тейĕн, ялта вăхăт иртнине те сисместĕп.**

Сăмах майăн каласан, Станиславпа мăшăрĕ икĕ ывăл çитĕнтереççĕ. Мăшăрĕ, Татьяна Вячеславовна, ялти ача садĕнче воспитательте вăй хурать. Амăшĕ, Луиза Васильевна, тивĕçлĕ канăва тухнă пулсан та, нумай çул хушши ĕнтĕ лавккара сутуçăра тăрăшать. Туслă, пĕр-пĕрне килĕштерсе, пĕр чĕлхе тупса тату пурăнаççĕ. Аслă пĕлӳ илнĕ хыççăн Станислав çар службинче пулнă. Виçĕ çул Мускавра чукун çул çинче ĕçленĕ. 2016 çултанпа – Çĕнĕ Пуянкасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ. Ĕçри çитĕнӳсемшĕн Станислав Данилов «Муниципаллă хăйтытăмлăхăн чи лайăх ертӳçи» номинацин II степеньлĕ Дипломне тивĕçнĕ.

Вырăнта пуçару бюджечĕн мелĕпе пурнăça кĕртнĕ ĕçсем çуллен сахал мар пулнă. «Май пур таран çеç мар, ытларах та тăвас тенĕ. Хамăршăн вĕт пурте, хамăр ялсенче пурăнакансем валли»,– тенĕччĕ вăл хăй вырăнти ял администрацийĕн ертӳçинче ĕçленĕ çулсенче пурнăça кĕртнĕ проектсем пирки. Кашни ĕçĕн хăйĕн тĕшши пур. Кивĕ Пуянкассипе Çĕнĕ Пуянкассинче пурăнакансем ыйтнипе тата хутшăннипе икĕ ял хушшинчи тӳртен çула вак чул сарса юсаса йĕркелени хăех мĕне тăрать. Пуçару бюджечĕн проекчĕпе тунă ăна. Çур километр ытла тăсăлать тӳртен çул. Çавра çул вара виçĕ хут вăрăмрах. Кивкассене уйрăмах çăмăллăх кӳнĕ вăл. Халиччен пĕр ялтан тепĕрне тӳртен çитме йĕпе-сапара пылчăк çăрма, хĕллесенче юр ашма тивнĕ пулсан, халĕ çуррана та, çăмăл машинăпа та çула кĕскетме пулать. Юпасем çинчи лампăсем çула çутатаççĕ, вăхăта перекетлеççĕ. Халăх хăй пуçарнă ку пĕлтерĕшлĕ ĕçе пурнăça кĕртме укçа та пухса панă хăйĕнчен тивĕçлĕ суммăна. Икĕ ялăн пĕр культура çурчĕ, çав икĕ хутлă çуртрах ял администрацийĕ те, почта çыхăнăвĕ те, ытти те вырнаçнă. Тӳртен çулпах çынсем Анастасьевсен 2008 çултанпа тĕрлĕ йышши пукансем кăларакан предприятине ĕçе çӳреççĕ. Унтанах Кивкас ачисем шкула е клубри ташă секцине васкаççĕ. Икĕ ял хушшинчи туслăх кĕперĕ пек вăл асăннă ялсенче пурăнакансемшĕн. Станислав Олегович ял тăрăхĕн пуçлăхĕнче тăрăшнă çулсенче çынсене ĕçмелли шывпа тивĕçтернине те асăнмасăр иртме çук. Шыв башнисене улăштарнă пурне те. Унсăр пуçне шыв пăрăхĕсем хывнă. Кивĕ Пуянкассинчи Ленин тата ытти хăш-пĕр урамсене Николай Федоров Чăваш Ен Президенчĕ пулнă çулсенчех пăрăхсем хывса башньăран ĕçмелли шыв çитернĕччĕ. 2022 çулта вара çак питĕ пĕлтерĕшлĕ ĕçе малалла тăснă. Халăхăн пуçару бюджечĕн программи пулăшнипе пурнăçланă ăна. Гагарин, Горький, К.Маркс, Комсомольски, Çеçпĕл, Пушкин, Молодежнăй урамсене, Соловьев тăкăрлăкĕ таранах çитнĕ ĕçмелли шыв – пурĕ 2300 метр тăршшĕ. Проектпа пăхнă çĕрте пушар гидранчĕсем вырнаçтарнă, колодецсем тунă. Çакăнпа пĕрлех шыв таппи çынсен килĕсене те кĕнĕ.

Шыв тенĕрен, пĕвесемпе кӳлĕсене тасатса типтерлессипе те нумай ĕçленĕ. Вĕсенче юшкăна кăларнă, тарăнлатнă, шыв пухăнса, çуталса тăмалла тунă. Пуянкасси ялĕсенче ку ĕçе малтисен шутĕнче пуçăннă. «Халăх ыйтни пирĕншĕн саккун пекех»,– тенĕччĕ пĕррехинче Станислав Олегович.

Кивĕ Пуянкасси ялĕн тĕп урамĕ, ытти чылай çĕрти пекех – Ленин ячĕллĕ. Ку вăрăм урама маларахах асфальт сарса тикĕсленĕ. Асăннă тĕп урамран кăнтăр еннелисем вара пурте аялалла, анаталла вырнаçнă. Вĕсем, тĕпрен илсен, шывлă-нӳрлĕ урамсем. Молодежнăй, Пушкин, Николаев, К.Маркс урамĕсем... Телее, пуçару бюджечĕн программи алă тăсса панă асăннă тата ытти хăш-пĕр урамра пурăнакансене, çултан çул, урам хыççăн урам йĕркеленнĕ: юсав туса, вак чул сарса типтерленĕ çулсене. Тăкакланмасăр пулман, паллах: çулсене йĕркене кĕртме кирлĕ суммăн пысăкрах пайне республика бюджетĕнчен уйăрнă, ыттине муниципалитет панă тата урамсенче пурăнакансенчен те килĕрен пухнă. Чи кирли – ĕçĕ пулнă, çавăнпа çынсем укçа пухса тата подрядчиксем тупса хытă сийлĕ çулсем туса панăшăн влаçа – республика ертӳлĕхĕпе вырăнти влаç органĕсенче ĕçлекенсене тав тăваççĕ.

Ытти ĕçсене те тимлĕхсĕр хăварман. Тĕслĕхрен, çӳллĕ ӳссе кайнă ватă йывăçсене касса типтерлессипе те ĕçленĕ. Вĕсем çынсем пурăнакан пӳртсем тата электричество линийĕсем çине ӳкес хăрушлăх тухса тăнă. Станислав Данилов хăй бригада йĕркелесе те икĕ ялти чылай йывăçа касса типтерленĕ. – Алла усса ларнипе ĕç малалла каяс çук. Икĕ ялĕпе çуллен нумайшар проект пурнăça кĕртме тăрăшрăмăр пуçару бюджечĕн программипе,– пĕтĕмлетнĕччĕ 2023 çулхи авăн уйăхĕн вĕçĕнче хăйсен юлашки çулсенчи ĕçне-хĕлне Станислав Данилов. Ял урамĕсенче çеç мар, Çĕнĕ Пуянкассинчи вăтам шкул территорийĕнче те, волейбол лапамĕнче те, ачасен вăйă площадкинче те ĕçсем пынă. Ача-пăча лапамĕсем виççĕ те халĕ Пуянкасси ялĕсенче. Выля, ӳс, аталан пулас ăру.

2023 çулта Çĕнĕ Пуянкасси территори пайне Владимир Николаевич Кузьмин ертсе пыма тытăннă. Çав çулхине те икĕ ялĕпе 17 проекта пурнăça кĕртнĕ. Кăçал вара пуçару бюджечĕн программипе 5 проекта пурнăçлама пăхнă – пурте пекех ялсенчи урамсене юсаса йĕркелессипе çыхăннине каларĕ кунти Наталия Алексеевна Максимова специалист. Пĕр проекчĕ – çула Пушкин урамĕнчен çаранти стадион таран йĕркелессипе çыхăннă.

Пуянкассисем спортпа туслă халăх. Кунта футболпа волейбол вăййисем те, хоккейла вылясси те хисепре. «Станислав Данилов ялта физкультурăпа спорт аталанса пытăр тесе те нумай тăрăшать, тăтăшах тĕрлĕ ăмăртусем йĕркелесе иртерет. Тăрăшулăхĕшĕн ăна район администрацийĕн Хисеп грамотине тата республикăри физкультурăпа спорт комитечĕн грамотине парса та чысларĕç» тенĕччĕ Эльвира Николаевна. Çăва тухсан, футбол-волейбол площадки çамрăксенчен пушă тăмасть.

Иртнĕ эрнере эпĕ ыйтнипе Станислав Олегович редакцие кĕрсе тухрĕ. Сăнĕ-пичĕ хĕвелпе, çилпе тата тарпа та пулĕ самаях писĕхнĕ тата хуралнă хăйĕн. Тӳрех курăнать, çын ĕçсĕр лармасть. Нумаях пулмасть вăл СВОра çапăçакан ентешсем патне те çитсе килнĕ, вĕсем патне округран гуманитари пулăшăвĕ, икĕ машина тата ытти япаласем илсе çитернĕ. Индивидуаллă предприниматель пулнă май, подрядчик шучĕпе тĕрлĕ çĕрте проектсем пурнăça кĕртме пулăшать. Ытларах Çĕнçырмари Владимир Николаевич Илларионовпа пĕрле ĕçленине каларĕ. Кăçал вĕсем вун икĕ проекта çул параççĕ. «Хамăр тăрăхра, Вăрмар, Куславкка, Пăрачкав округĕсенче вăй хуратпăр. Тăвайра Ленин урамĕнчи юпасем çине электролампăсем çакрăмăр. Çывăх вăхăтра Йăнтăрчă ялĕнче унччен шкул пулнă çуртсен çывăхĕнче çынсене маршрутлă автобус е Газель кĕтсе илме ансат пултăр тесе павильон вырнаçтарма хатĕрленетпĕр»,– терĕ. Тăвай округĕн пуçлăхĕ Олег Анатольевич Ломоносов иртнĕ эрнере вырăнти предпринимательсемпе тĕл пулнă чухне ăна чи пултаруллисен шутĕнче асăннă. Çак хисепе Станислав Данилов кулленхи ĕçпе çирĕплетет. Индивидуальнăй предприниматель пулнă май, çĕр участокĕ те пур. Унта вăл нумай çул ӳсекен курăксем, тыră акса тăвать, мĕн çитĕнтернипе халăха тивĕçтерет.

**Иван ГЛАДКОВ**

АСЛĂ ÇĔНТЕРĔВЕ – 80 ÇУЛ

# Пĕртăван Мартыновсем – вăрçă паттăрĕсем

**Аслă Çĕнтерӳ тунăранпа 80 çул çитнĕ пулсан та паттăрсен ячĕсем манăçмаççĕ. Шыравçăсем çĕнĕрен çĕнĕ ятсем тĕпчесе тупаççĕ. Акă, нумай пулмасть Çĕнĕ Ишпуç ялĕнчи икĕ вăрçă участникĕ, пĕртăван Мартыновсен, паттăрла ĕçĕсем çинчен пĕлме тӳр килчĕ.**



Г.М.Мартынов

Гавриил Мартынович Мартынов 1914 çулхи кăрлач уйăхĕнче çуралнă. Вăрçăччен вăл ялта колхозра ĕçлесе пурăннă. Фашистла Германи пирĕн Тăван çĕршыв çине тапăнса кĕрсен, Мускав облаçĕнчи Кунцево çар комиссариачĕ урлă 1941 çулхи июнь уйăхĕнче вăрçа тухса кайнă. Тепĕр документ тăрăх Тăвай çар комиссариачĕ çав çулхинех июльте ăна чĕнтерни паллă. Вăл III Белорусси фронтĕнче кĕçĕн сержант званипе 1278 зенитлă артиллери полкĕнче тăшмансене хирĕç паттăррăн çапăçнă. Гавриил Мартынов ефрейтор-наводчик пĕр çапăçура аманнă. Кенигсберг хулине штурмланă чухне хăйĕн орудийĕнчен персе тăшманăн 15 салтакĕпе офицерне тĕп тунă. Пехотăна малалла кайма çул уçса панă. Г.Мартынов тăракан артиллери расчечĕ фашистсен 3 самолетне персе антарнă.

Фашистла Германие çĕнтернĕ хыççăн Гавриил Мартыновичăн Япони империалисчĕсене хирĕç кĕрешме тивнĕ.



П.М.Мартынов

Паттăр салтака икĕ хутчен «Хастарлăхшăн», «Паттăрлăхшăн», «Япони çĕнтернĕшĕн», «Ĕçри паттăрлăхшăн. В.И.Ленин çуралнăранпа 100 çул çитнĕ ятпа», «1941–1945 çулсенче Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче Германие çĕнтернĕшĕн», «1941–1945 çулсенче Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче хастар ĕçленĕшĕн» медальсемпе наградăланă. Тĕп Главнокомандующин Тавне те тивĕç пулнă. Ăна сывăх çыннисем халĕ те упраççĕ.

Вăрçăран таврăнсан Гавриил Мартынов ялта тимĕрçĕре ĕçленĕ. 1971 çулхи çу уйăхĕнче çут тĕнчерен уйрăлнă.

Унăн шăллĕ Петр Мартынович Мартынов 1923 çулхи ака уйăхĕн 23-мĕшĕнче Ишпуç ялĕнче çуралнă. Медицина училищинче вĕренсе фельдшерта ĕçленĕ. Вăрçă пуçлансан, Тăвай çар комиссариатне 1941 çулхи августăн 19, 29-мĕшĕсенче, сентябрь уйăхĕнче чĕнтерни паллă. Тĕрлĕ документ çинче тĕрлĕрен. Медицина службин гв. аслă лейтенанчĕ, капитан, санитари взвочĕн командирĕ паттăррăн тăшмана хирĕç çапăçнă. Аманнă. ПМПра (полевой медицинский пункт) санрота фельдшерĕ пулнă. Кенигсберг хулине ирĕке кăларма хутшăннă. Тăшмансем вăйлă персе тăнă вăхăтрах çапăçу хирĕнчен аманнă 18 салтака тата 3 офицера илсе тухнă. Вĕсене медицина пулăшăвĕпе тивĕçтернĕ. Наступлени вăхăтĕнче нимĕç оборонине татса кĕнĕ чухне Ярышко, Витебск çывăхĕнче Фролово ялĕ патĕнче хăйсен батальонĕнче медпункт йĕркеленĕ, йывăр аманнисене вăхăтра медицина пулăшăвĕпе тивĕçтернĕ. 113 салтакпа офицера ПМПран медсанбатальона, йывăр аманнисене çапăçу хирĕнчен хăвăрт эвакуацилес ĕçе йĕркеленĕ. Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче пурĕ 754 салтакпа офицерăн пурнăçне çăлнă.

Ăста та паттăр фельдшера виçĕ хутчен Хĕрлĕ Çăлтăр, I степень Отечественнăй вăрçă орденĕсемпе, икĕ хутчен «Çапăçури паллă ĕçсемшĕн», «Кенигсберга илнишĕн», «1941–1945 ç.ç. Аслă Отечественнăй вăрçăра Германие çĕнтернĕшĕн» медальсемпе наградăланă. Вăрçă хыççăн Петр Мартынович Шупашкар хулинче санэпидемиологи станцинче ĕçленĕ. 1988 çулта вилнĕ.

**Зинаида ИВАНОВА, таврапĕлӳçĕ. Чутей ялĕ**

ВĂРÇĂ АЧИСЕМ

# Эпир ир çитĕнтĕмĕр...




**Аслă Çĕнтерĕвĕн 80 çулхи юбилейĕ ячĕпе «Дети войны. Из воспоминаний» кĕнеке кун çути курчĕ. Унта Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин çулĕсене тӳссе ирттернĕ вăрçă ачисен асаилĕвĕсене кĕртнĕ. Пĕтĕм Раççейри проектпа килĕшӳллĕн пуçарнă ĕçе пурнăçа кĕртме Чăваш Республикин Вĕренӳ министерстви шкул ачисене, шыравçăсене, çамрăк армеецсене, педагогсене, музей сотрудникĕсене явăçтарнă. Вăрçă çулĕсене чăтса ирттернисен (18 çула çитейменнисен) асаилĕвĕсене республикăри 582 çынран çырса илнĕ. Вĕсенчен 90 ĕçе кĕнекене кĕртнĕ.**

Çу уйăхĕн 23-мĕшĕнче Шупашкарта çĕнĕ кĕнекен презентацийĕ иртнĕ. Мана та, вăрçă ачине, унта хутшăнма тӳр килчĕ. Пурне те асăнмалăх кĕнеке парнелерĕç. Чуна пырса тивекен кашни асаилĕвех вуласа тухрăм.

Хаяр вăрçа пула мĕн чухлĕ çыннăн нуша, инкек-синкек, сивĕ, выçлăх тӳсме тиврĕ? Кĕçех вăрçă пуçланнăранпа 85 çул çитет. Чăтма çук йывăр сурап паянхи кун та сипленсе çитмест иккен.

Канаш районĕнчи Янкăлчă ялĕнчи Раиса Петровна Силодорован асаилĕвĕпе паллашнăçемĕн куççуль шапăртатрĕ. Эпĕ курнă, чăтса ирттернинчен унăн тата та ытларах тӳсме тивнĕ. Унпа хамăр вулакансене те паллаштарас шухăш çуралчĕ.

Янкăлчăра вĕсен çемйи 1940 çулхине Карелине куçса кайнă, ĕнине те пĕрле илнĕ (çемьене тăрантаракanpa уйрăласшăн пулман). Унта çитсен пысăк çĕнĕ çурт панă вĕсене. Ашшĕпе амăшĕ колхозра ĕçленĕ. Раиса 12 çулта пулнă, шкула çӳренĕ. 7 уйăха çеç пынă лайăх пурнăç. Вăрçă пуçланнă. Ашшĕ виççĕмĕш кунне вăрçа тухса кайнă. Текех курайман ăна килтисем. Виçĕ ача, амăшĕ тăваттăмĕшпе çире юлнă.

Акă мĕнле аса илет Раиса Петровна çав вăхăтрисене.

... Вăрçă пуçлансан 5-мĕш кунне яла салтаксем çитрĕç, ял халăхне эвакуацилеме хушрĕç. Колхоз япаласене тиеме лашасем пачĕ. Салтаксем эпир лартнă паçмасем çине окопсем чавма пуçларĕç. Çимĕçсем пĕтнĕшĕн пăшăрхантăм. Чăн-чăн хăрушши малта кĕтрĕ. Хамăрăн тата колхозăн выльăхĕсемпе çула тухрăмăр. Питĕ вăрăм колонна пулчĕ. Кăштах кайсан нимĕç самолечĕсем пире курнă, пуç тăрринчех вĕçсе бомбăсем пăрахма пуçларĕç. Лашасем ĕрĕхсçĕ, чарма май çук. Çынсем кăшкăраççĕ, ачасем йĕреççĕ. Йăмăка алла илсе вăрман еннелле чупрăмăр. Анне пире чĕнет, кăшкăрать. Вăрмана кĕрсе пĕр шăтăка кĕрсе пытансан çеç анне пире тытса каялла илсе кайрĕ. Эпир хăранипе нумай вăхăт йĕтĕмĕр. Самолетсем кая-кая килсе 7 хутчен бомба пăрахрĕç. Мĕн чухлĕ çын, выльăх вилчĕ. Юлнă ĕнесене, качака-сурăхсене аран пухса малалла кайрăмăр. Чылай вăхăт иртсен пĕр вăрăм кĕпер урлă каçма пуçласан каллех нимĕç самолечĕсем вĕçсе çитрĕç. Пуçланчĕ суйхашу. Çынсем кăшкăраççĕ, йĕреççĕ. Лашасем кĕпер çинчен шыва сикеççĕ, вилмеллех аманнăскерсем тискер сасăпа кĕçĕнеççĕ, ĕнесем мĕкĕреççĕ. Çынсем те чылайăн вилчĕç.

Çапла майпа карело-фин чиккинчен 400 çухрăм кайма май пулчĕ. Колхоз выльăхĕсене патшалăха патăмăр. Пирĕн çемье виçĕ ачапа, ĕнепе, ытти эвакуированнăйсемпе (вĕсен хăйсен выльăхĕсем пур) баржа çине вырнаçса малалла çула тухрĕ. Пристаньсенче чарăнса пассажирсем тухнă вăхăтра выльăхсем валли курăк çулса, вĕсене тăрантарнă, хамăр çикеленĕ. Пĕр виçĕ эрнерен Вологодски облаçĕнчи Белозерск хулине çитрĕмĕр. Анне çăмăлланма пуçланипе больницăна лекрĕ. Эпир, ачисем, ĕнепе анне кĕтме юлтăмăр. Баржа малалла кайрĕ. 9 çулхи Зинăна, 5 çулхи шăллăма ниçта та каймалла мар тесе хытарса, хам анне çинчен пĕлме больницăна кайрăм. Вĕсем вылянă, ывăннăскерсем çывăрса кайнă, ĕне курăк çисе вĕçерĕннĕ. Йĕре-йĕре ĕне шыратпăр. Телей пулчĕ. Юрать вăл кантрипе йывăç туратĕнчен çакланса аякка каяйман.

Виçĕ кунтан аннене çуралнă ывăлĕпе больницăран кăларчĕç. Пĕчĕкскере Мефодий ят патăмăр. Ку вăл 1941 çулхи августăн 9-мĕшĕнче пулчĕ. Ашшĕне сăн ӳкерчĕкре çеç курса ӳсрĕ вăл. Урăх баржа çине ларса август уйăхĕн юлашки кунĕсенче Шупашкар пристанне çитрĕмĕр. Халăх нумай. Пурте тĕрткелешеççĕ, тем шыраççĕ, шавлаççĕ. Анне таçтан пеленка, утиял тупса ачана чĕркерĕ. Ĕнине кăкарса пире ниçта та кайма хушмарĕ. Паллакан е хамăр енне каякан çынсене шырама кайрĕ. Телее, Канаш енне каякана тупса тăванĕсене пирĕн нуша çинчен пĕлтерме хушнă. Тепĕр темиçе кунтан Ваçça тете çитсе аннепе 3 ачине поезд çине билет илсе лартсах ячĕ. Мана, 12 çулхи хĕрачана, ĕнепе, старике (Канаш районĕнчи Кушак ялĕнчен) качакапа пристаньре хăварчĕ. Вара эпир виççĕмĕр çурран утрăмăр. Икĕ кунпа икĕ çĕртен Шупашкартан Кушак ялне çитрĕмĕр. Питĕ ывăннăран мана ĕне çине лартнине пĕлетĕп. Урана мĕн тăхăннине, яла мĕнле çитнине астумастăп. Ыратнипе ура çине тăрайми пулнă. Тĕрлĕ майпа сиплерĕç мана Ваçça тете патĕнче. Урасем самайлансан вăлах Котяки ялне çитиччен (пирĕн патне çитме 9 çухрăма) ăсатса ячĕ. Çав ялта атте ĕçленĕ. Эпĕ унта темиçе те пулнă. Çула пĕлетĕп тесе малалла утрăм. Çул юппинче аташса кайрăм, пĕри Татмăша, тепри Янкăлчăна каять. Лартăм та йĕретĕп. Ĕнене алран ямастăп, вăл курăк çиет. Телее, колхоза кĕменнисем хăйсен çĕрĕ çинче ĕçленĕ: мана асăрханă, лăплантарчĕç, яла çитме çул кăтартса ячĕç.

Эпĕ питĕ вăйсăр пулнăран ĕнене çухатасран хăраса алă çумне çыхса пытăм, унпа каласрăм, çитертĕм. Апла пулсан та хамăр ял çĕрĕ çине кĕрсен ĕне пачах урăхла тытма пуçларĕ: мана итлемест, пуçне тăратса мăшмăш сывлать, кĕтмен çĕртен алăран салтăнса рысь пек чупса кусран çухалчĕ. Йĕре-йĕре чупатăп. Пуçра пĕр шухăш: «Мĕн пулать халĕ? Мĕн чухлĕ нушалантăм та ĕнене çухатрăм-ши?» Яла кайма хăратăп. Йĕтĕм-йĕтĕм те малалла утрăм ялалла. Пăхатăп та мана хирĕç çынсем чупаççĕ, анне малта. Вăл çитрĕ те мана ыталаса илчĕ. «Хĕрĕм, çитрĕн-и?»– терĕ. Тĕлĕнтермĕш: ĕне киле чупса çитнĕ иккен. 1940 çулхи декабрь уйăхĕнче ялтан кайса 1941 çулхи август вĕçĕнче киле çитрĕмĕр. Выльăх та хăйĕн килне, Тăван çĕршывне пĕлет, астăвать иккен.

Раиса Петровнан ялти малалли пурнăçĕ, ĕçĕ-хĕлĕ çинчен çырмарăм. Вĕсем çинчен юлашки çулсенче хаçатра чылай статья пичетленĕччĕ. Çавна çеç калас килет. «Вăрçă ачисен» ачалăхĕ пулмарĕ. Вăхăтсăр, ир çитĕнчĕç. Чăтăмлă, тӳсĕмлĕ, тăрăшуллă, хастар пулчĕç, кашниех пурнăçра хăй вырăнне тупрĕ. Чылайăшĕ пурнăçран уйрăлса кайрĕ. Пурăнакансенчен чи çамрăкки те 80 çултан иртрĕ. Вĕсене хальхи çителĕклĕ пурнăçпа малалла утма çирĕп сывлăхпа телей, канлĕ ватлăх пултăр.

Кĕнекене алла тытрăм та çĕрĕпе çывăраймарăм. Куç хупăнмарĕ. 90 автор, 90 тĕрлĕ шăпа. «Ял ĕçченĕ» хаçата ирччених çак статьяна çыртăм. Пĕр шăпа урлă çав вăхăтри вăрçă ачисен пурнăçĕ çинчен çамрăксене пĕлтерес терĕм.

**Елизавета ИЛЬИНА, вăрçă ачи. Вăрманхĕрри-Тăвай**

# Сăвă каласа тата çырса

**Муниципалитет округĕн общество палати, Тăвайри халăх таврапĕлӳ музейĕ, Чăваш Республикин композиторĕсен ассоциацийĕн членĕ Анатолий Кириллов тĕрлĕ ӳсĕмри пултарулăх çыннисемпе «Эпир вăрçă çинчен сăвăпа калаçатпăр» тĕлпулу йĕркеленĕ.**




Унта хутшăнакансем Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин астăвăмне хаçат-журналсенче, кĕнекесенче, ытти ĕç-хĕлре хăварнин пĕлтерĕшне палăртнă. Тĕрлĕ конкурс çĕнтерӳçисем – Ульяна Васильевапа (Çĕнĕ Пуянкасси шкулĕ, 3 класс) Виктория Осипова (Мучар шкулĕ, 6 класс) çĕкленӳллĕ туйăмпа вăрçă çинчен сăвăсем вуланине итленĕ.

Аслă Çĕнтерӳ юбилейне халалланă А.Н.Кирилловăн «Парне пултăр саншăн, ветеран» кĕвĕ валли «Çĕнтерӳçĕ салтаксем» ятпа ирттернĕ сăвă конкурсне пĕтĕмлетнĕ. Елена Андреевна Фоминана (Нӳшкасси), Валерий Анатольевич Петровпа Валентина Михайловна Павлована (иккĕшĕ те Тушкил), Вячеслав Егорович Горбунова (Тĕмер), Наталия Шамбулинана (Чутей шкулĕ) пултарулăхĕшĕн тĕрлĕ дипломсемпе чысланă.

**Владимир ШАКРОВ,**
**Общество палатин ертӳçи**

# Çимĕк çитрĕ

**Чăвашсемшĕн пысăк уяв шутланать çимĕк кунĕ. Кăçал ăна çĕртме уйăхĕн 7-мĕшĕнче паллă тăваççĕ. Юлашки вăхăтра Тăвай тăрăхĕнче масар хапхисене, картисене юсанă. Çурчĕсене çĕнетессипе те чылай ĕç туса ирттернĕ. Çӳп-çапран тасатма, ӳссе кайнă йывăççене касма нимесем йĕркеленĕ.**

Масар ĕмĕртенпех православи çыннисемшĕн сăвапла вырăн пулнă. Çак сăмахсен пĕлтерĕшне асра тытса малашне те сăвапλăхра тытасчĕ хамăрăн çывăх çынсем канăç тупнă вырăна.

Çимĕк кунĕ аякри тата çывăх тăвансене пуçтарать. Нумайăшĕ масар çине маларах кайса вилтăприсене типтерлет. Кĕлĕ вуласа вилнисене асăнаççĕ çав кун. Вилтăпри çинче шавлă калаçни-кăшкăрашни, асăнава эрех-сăрапа паллă туса ĕçкĕ-çике çавăрса этем ретĕнчен тухни чыс кӳмест.

Çимĕке шăматкун тата вырсарникун каякан ялсем те пур, кĕçнерникун та вилтăприсем патне çитсе асăнаççĕ çывăх çыннисене хăш-пĕр ялсенче.

**Альбина ИВАНОВА**

# Пысăк хавхаланупа

**Çак кунсенче Тăвай муниципалитет округĕнчи «Пĕрремĕшсен юхăмĕн» активисчĕсем Чăваш Ен делегацийĕн йышĕпе Мускаври çĕршывăн тĕп выставкинчи çамрăксен фестивалĕнче пулнă.**

«Ку вăл вăй-хал, талант тата ĕмĕтсем пĕрлешнĕ чăнчăн уяв пулчĕ. Хавхалантаракан, çăлтăрсемпе, паллă çынсемпе иртнĕ тĕлпулусем, интереслĕ дискусси площадкисем, хамăр вăя, пултарулăха ĕненме пулăшакан мероприятисем, мастер-классем пĕтĕмпех асра юлчĕç»,– теççĕ Карина Максимова (Çĕнĕ Пуянкасси), Марина Баданова (Мучар), Наталья Шамбулина (Чутей), Анна Юзукова (Тĕмер), Ева Ларионова (Тăвай шкулĕ).

Тăван çĕршыв хӳтĕлевçин, Аслă Çĕнтерĕвĕн 80 çулхи тата Пĕрремĕшсен юхăмĕн туслăх çулталăкĕсенчи темăсем çамрăксемшĕн ырă тĕслĕх пулса, āсталăх проекчĕсем пуçарса сӳтсе явма витĕм кӳнĕ.

**Татьяна ИВАНОВА**



# Хастар хутшăнар!

**Тăвай Ен куç умĕнчех улшăнса пырать. Округ центрĕнче юлашки çулсенче ырă пуçарусене çул парса кану вырăнĕсем йĕркелессипе чылай проекта ĕçе кĕртнĕ.**




Хальхи вăхăтра «Пурнăç инфратытăмĕ» наци проекчĕпе килĕшӳллĕн Зоя Космодемьянская палăкĕ патĕнчи территорие хăтлăх кӳрессипе тăрăшаççĕ. Унти тирпей-илем ĕçĕсен 2026 çулхи иккĕмĕш тапхăрĕнче тĕллевсен хăш проектне суйлассипе онлайн-сасăлав июнĕн 12-мĕшĕнче вĕçленет. Çавăнпа юлнă кунсемпе усă курса хăтлăх кӳмелли проектшăн сасăлама хастар хутшăнар!

Тирпей-илем кĕртме палăртнă вырăна суйласа илме волонтерсен пулăшăвĕпе анлăн усă кураççĕ округра. Паянхи куна 1900 ытла сасă пухнă. Ялти çамрăксен агрослетĕнче ку тĕллĕшпе активлăх кăтартнă вĕсем.

Сăн ӳкерчĕкре туслă командăри Ксения Матвеевапа Регина Егоровна ытти муниципалитетсенчи волонтерсемпе пĕрле куратăр.

**Раиса ВАСИЛЬЕВА**

### Тăрă çăллă Сăхăт

Çуралнă ялăм, Сăхăтпуç çеремĕ
Ем-ешĕл, халиччен куç умĕнче.
Çара уран ачалăхра çӳренĕ...
Çавсен асамĕ чунăм çумĕнче.
Ытарлă маншăн ĕлĕкхи ачалăх,
Микки сăртне чупса ухса тăрсан –
Çунат хушатчĕ ăнланман асамлăх.
Эп савăнаттăм таврана пăхсан.
Тавра илемĕ – вăрттăнлăх тĕпчевĕ,
Чĕвĕлтететчĕ тăпăл чĕрере.
Тăнланă-туйăннă тĕнче чĕтревĕ,
Килейĕ-ши çапла тата тепре?
Иртни умрах, вăл тăрă çăллă Сăхăт,
Çӳç шуралсан та – эсĕ çаплипех.
Кунти тӳпе уяр та ăшă, лăпкă...
Эп юнашар ялан ял çыннипе!

0274

### Кĕмсĕртетрĕ тулта сасă

Шухăшра шуйханатăп пĕччен
Мĕн ирччен, шуçăмччен каçăхса.
Канăçра та мана пит кичем –
Тухăçра вĕçĕп-и ăнăçса?!
Анăçа анса ларĕ хĕвел.
Хальхи пек – ыран тăххăр çитĕ.
Улшăнайĕ-и пирĕн тĕпел?
Мĕнле пĕлĕт ыран пире витĕ?
Кĕмсĕртетрĕ тулта усă сасă,
Аслати çурса ячĕ чуна!
Çиçĕм çиçрĕ – çуталчĕ касă,
Çакă вăй катса хурĕ чула!
Тĕттĕмре чĕре чарăнчĕ тейĕн,
Çĕр чĕтрерĕ, кисренчĕ тĕнче!
Тунсăх витĕр эп кĕтнĕ телейĕм
Тĕкĕр евĕр çутатрĕ çиçсе.
Те чăнах?
Тен, ку тĕлĕк пулчĕ?
Алăка тăрмалать-çке кушак.
Леш енчен кам-ши алă сулчĕ?
Унта юлнă ик тăлăх пушмак.

0275

### Зима

Снегом белым освещает
Всю природу – мать зима.
Красоту нам завещая,
Спит во сне уже земля.
Новый след у старых саней
Мысль ослепляет взор.
Я зимы не знаю граней –
Манит в волшебство узор.
В миг сугутские березы
Тут напомнят об отце.
Отчего не знаю, слезы
Вновь застыли на лице.

**Лаврентий ДАНИЛОВ,**
**Сăхăтпуç ялĕ**

0274

КОНКУРССЕМ

# Коррупцие хирĕç кĕрешесси – пĕрлехи ĕç

**Раççей Федерацийĕн прокуратури шкул ачисемпе студентсем хушшинче «Вместе против коррупции!» конкурс ирттерет.**

Унăн тĕллевĕ – çамрăк ăрава коррупци проблеми çине тимлĕх уйăрма вĕрентесси, ачасемпе çамрăксен пуçарулăхне хавхалантарасси, коррупцие хирĕç кĕрешессинче влаç органĕсемпе общество пĕрле ĕçлессине практикăна кĕртесси. Заявкăсене 2025 çулхи октябрĕн 25-мĕшĕччен йышăнаççĕ.

Конкурсăн çурма финалĕпе финалĕ октябрĕн 25-мĕшĕпе ноябрĕн 25-мĕшĕнче иртет.

Мероприяти виçĕ номинацире – «Чи лайăх плакат», «Чи лайăх ӳкерчĕк», «Чи лайăх видеоролик» – иртет, çĕнтерӳçĕсене 10–15, 16–20, 21–25 çулсенчи ӳсĕм категорийĕсенче палăртаççĕ.

Конкурс ĕçĕн ячĕ, ăнлантарса çырни пулмалла.

Конкурс çинчен тĕплĕнрех www.anticorruption.life сайтра паллашма пулать.

Çĕнтерӳçĕсене декабрĕн 9-мĕшĕнче, коррупципе кĕрешмелли кун, чыслаççĕ.

**Светлана НИКОЛАЕВА,**
**округ пуçлăхĕн çамрăксен ыйтăвĕсемпе ĕçлекен советникĕ**

## «Эпĕ – хĕрарăм» конкурс

**Чăваш Енри Хĕрарăмсен Пĕрлĕхĕ тата ЧР аталанăвĕн фончĕ «Эпĕ – хĕрарăм» конкурс ирттерет. Тăвай округĕнчен унта кăçал 28 хĕрарăм хутшăнать.**

Сасăлав июнĕн 9–17-мĕшĕсенче иртет. Итогсене Республика кунĕнче пĕтĕмлетсе, çĕнтерӳçĕсене чыслĕç.

Хамăрăн Тăвай Енри маттур хĕрарăмсемшĕн сасăлар!

**Татьяна ИВАНОВА**




## Ăшшăн саламлатпăр

Хисеплĕ ĕç ветеранĕн, Кармал ялĕнче пурăнакан **Мария Андреевна Степанован** 90 çулхи çуралнă кунĕ пулчĕ. Эпир ăна çак сумлă юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Çирĕпрен те çирĕп сывлăх, ырă кун-çул, канлĕ ватлăх, иксĕлми вăй-хал сунатпăр. Умра çутă кунсем анчах пулччăр, вĕсем сире савăнăç кӳччĕр.

Сирĕн сывлăхăр тĕреклĕ пултăр<br>
Çăлкуç пек тăтăр вăл тапса.<br>
Телей хĕвелĕ сирĕншĕн çунтăр,<br>
Çапла калатпăр ыр сунса.

**«Тăвайри кооператив» потребобщество**




**Военный комиссариат по г. Канаш, Канашскому и Янтиковскому районам Чувашской Республики: г. Канаш, ул. Полевая, 18**

**Телефон дежурной части: 8 (835 33) 4-18-21**

**Инструктора пункта отбора на военную службу по контракту Андреев Иван Альбертович 8-952-027-51-12**

# Шкула юратăр, пире те ан манăр!

**Ачасене кăна мар, вĕсен ашшĕ-амăшĕпе воспитательсене те хумхантаракан самант вăл – ача садĕнчи кăларăм вăхăчĕ: Тăвайри 1-мĕш номерлĕ ача сачĕ хăйĕн выпускникĕсемпе сывпуллашрĕ. Шавлă та хаваслă иртрĕ кăларăм утренникĕ.**



Çак савăнăçлă уява ачасен ашшĕ-амăшĕпе пĕрлех хăнасем те пухăннă. Вĕсем хитре тăхăннă, самай ӳссе маттурланнă ачасем хăйсен тăван ача сачĕпе мĕнле сывпуллашнине пăлханса сăнанă. Ачасем юрласа-ташласа тата инсценировкăсем лартса парса хăйсен пултарулăхĕпе ăсталăхне кăтартнă. Хаваслă та, хумханулла та пулнă кăларăм вăхăчĕ. Выпускниксем ача садне вĕçлени çинчен дипломсем тата парнесем илнĕ. Ашшĕ-амăшĕ ача садĕнче ĕçлекенсене тимлĕ те пархатарлă ĕçшĕн тав тунă. Уяв вĕçленсе пынă май хĕр ачасемпе арçын ачасем телейлĕ малашлăхра хăйсен ĕмĕчĕсем пурнăçа кĕрессе шанса тӳпене кăвакарчăнсемпе шурă шарсем вĕçтернĕ.

«Шкула та, ача садне юратнă пекех юратăр. Çав вăхăтрах пире те ан манăр!»– тенĕ хăйĕн выпускникĕсене ăнăçу сунса Тамара Николаевна Павлова воспитатель.

**Тамара ПАВЛОВА**

ПĔЛТЕРӲСЕМ – ОБЪЯВЛЕНИЯ


2027 КУПЛЮ коз, овец на мясо . Т. 8-908309815

0301 ПОРОСЯТА 1,5-2 мес. 3500р. Т. 8-9656889762 5-1

0280 ПЛАСТ. ОКНА и двери. Т. 8-9603018627

0213 Сăвакан качака сутатăп. Т. 8- 9626004438

0178 ПОРОСЯТА 1,5 мес. 4000р. Т. 8-9373763777 2-2

0151 НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ. Т. 8-9279985488. Володя. 11-3

0139 ПРОДАЮ поросят. Дост. Т. 8-9373964773 6-3

0027 ПЕСОК. ГРАВМАССА. Т. 8-9083071382 5-5

2206 КУП. КОЗ, ОВЕЦ, БЫЧКОВ Т. 8-9278508564 25-11

2227 ПЕСОК. ГРАВМАССА. ЩЕБЕНЬ. НАВОЗ. От 3-х тонн. Т. 8-9523106871 11-10

2092 Требуются разнорабочие в Москву. З/п от 100 тыс. р. Т. 8-9373882555 25-18

2027 КУПЛЮ бычков, коров, телок. Т. 8-9370160057 23-21

0321 ПЕСОК. ЩЕБЕНЬ.ОПГС. Т. 8-9061333944 22-1

0234 БУРЕНИЕ колодцев, Ж/б колец. Доставка. Т. 8-9603061972 4-1

0320 ПЛАСТ. ОКНА. Качественно с установкой. Т. 8-9656867950 11-1

0080 Ремонт холодильников, стир. машин и ЖК ТВ. Т. 8-9279955504 3-2

0303 ПЛАСТ. ОКНА и двери остекл. Балконов по низким ценам от произ.-ля. Качество. Гарантия. Скидки. Т. 8-9603031551 13-1

2191 « ЭЛЕКТРОПАСТУХИ» На любую площадь. Есть доставка. Выгодные цены. Машинки для стрижки овец. Т. 8-9613472140 11-5

0153 ПРИГЛАШАЮ швей, рабочих по производству лего-кирпича в с.Янтиково. Продажа лего кирпича – цена 25 руб./шт. Цемент - м-500 – 440 р./мешках, ул. Строительная – 8. Т. 8- 9656896991


ПАХЧАÇĂСЕНЕ ПУЛĂШСА

## Кăткăран хăтăлма

**Пахчана кăткă тапăнсан унпа мĕнле кĕрешмелле? Банан хуппи кăна кирлĕ. Лайăх пиçнĕ, хуппи çинче унта-кунта хура пăнчă çимĕçе суйламалла. Кăткă шăпах ăна кăмăллать.**



Банан хуппи, çур литр шыв, 10 грамм бор йӳçекĕ илмелле. Бор йӳçекне ăшă шывпа хутăштармалла. Унта банан хуппине темиçе сехетлĕхе ямалла. Кайран ăна кăткă тапăннă вырăна (йывăç айне, теплицăна) хумалла. Хурт-кăпшанкă тӳрех банан хуппине илĕнет, бор йӳçекĕ нумайăшне вилет. Çав вăхăтрах бор йӳçекне чиксе кăларнă банан хуппи ӳсен-тăраншăн та усăллă пулĕ. Уйрăмах – улмуççипе грушăшăн, теплицăри помидорпа пăрăçшăн.

ШУТА ИЛМЕ

## Тӳрех – йăран çине

**Кабачок чăмăртаннăранпа 8-12 кун иртсен, вăл 20-25 сантиметр тăршшĕ пулсан, ăна çиме юрать. Ун чухне вăл уйрăмах тутлă.**



Хăярпа танлаштарсан, кабачока ăшă питех кирлĕ мар. Унăн вăрри 8-9,5 градус ăшăра шăтма пуçлать. 10 сантиметр тарăнăшне аксан 6-7 кунран шăтать. Çимĕçне пулмашкăн 15-27 градус ăшă кирлĕ.

Кабачок 50-60 кунран пĕрремĕш çимĕçне парать. Çавăнпа ăна тӳрех пахчана акма та юрать. Хăшĕ-пĕри калчана пӳртре ӳстерет. Çав вăхăт тĕлне унăн 2-3 пысăк çулçă тухать.

Кабачока çăра лартмалла мар. Ретсен тата ӳсентăран хушшинче 70 сантиметртан кая мар пултăр. Калчана лартнă чухне 30-35 сантиметр тăршшĕ диаметрлă шăтăк тумалла. Тăпрана унччен органика тата минерал удобренийĕсемпе тутлăлантарнă пулин те кашни шăтăка çур витре çĕрĕк тăпри е 1 шăрпăк курупки суперфосфат хумалла.

Кабачока нӳрĕ сывлăш кирлех мар, çавăнпа ăна тымарĕ патне шăварни те çителĕклĕ. Ӳсентăран тăррине нумайăшĕ татмасть. Анчах хăшпĕр пахчаçă ку процедура хыççăн çимĕç нумайрах пулнине ĕнентерет. Çимĕçе кашни 6-8 кунра пуçтармалла. Ăна татмалла мар, çĕçĕпе кассан лайăхрах.

Йăнтăрчă шкулĕнче ĕçленĕ учительсемпе ытти работниксем шкулта вырăс чĕлхипе литература вĕрентнĕ Наталья Николаевна Николаеван мăшăрĕ

**Виталий Михайлович НИКОЛАЕВ**

йывăр чире пула вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет. 0322

Енĕш Нăрвашри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул коллективĕ вырăс чĕлхипе литератури вĕрентекен Наталья Николаевна Николаеван мăшăрĕ

**Виталий Михайлович НИКОЛАЕВ**

йывăр чирлесе выртнă хыççăн вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет. 0318

«Тăвайри кооператив» потребобщество Кармалти магазин сутуçин Светлана Алексеевна Димитриеван шăллĕ

**Сергей Алексеевич ПОПОВ**

Украинăри ятарлă çар операцийĕнче паттăрла вилнĕ пирки унăн çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.


"Ял ĕçченĕ" ("Сельский труженик")

Тĕп редактор А.Е.ЕГОРОВА

Учредительсем – Чăваш Республикин цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Ен цифра аталанăвĕпе информаци политикин министерствин «Тăвай районĕн «Ял ĕçченĕ» хаçат редакцийĕ» ХТУ

Хаçата çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмне тĕрĕслесе тăракан федераллă службăн Чăваш Республикинчи – Чăваш Енри Управленийĕ 2012 çулхи октябрĕн 8-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00239 №-пе регистрациленĕ.

Хаçат эрнере 1 хут (эрнекун) чăвашла (хăш-пĕр материалсем вырăсла) тухать.

Пичете панă 05.06.2025 ç. 19.00, графикпе 19.00 сех.

Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ тата каялла тавăрса памаççĕ. Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн редакци явап тытмасть. Реклама материалĕсен палли – Р

Номерщĕн яваплă дежурнăй Р.В.ШУМОВА

Компьютерпа калăплакан: Н.В.АЛЕКСАНДРОВА

Хаçата районти "Ял ĕçченĕ" хаçат редакцийĕнче наборласа версткӑланă, "Чăваш Ен" ИПК" АУ типографийĕнче пичетленĕ. Адрес: 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13-мĕш çурт. Çырăнтару индексĕ – ПР 238. Калăпăшĕ – 1 пичет листи. Тираж – 1620 Заказ

Редакципе издатель адресĕ: 429290, Чăваш Республики, Тăвай ялĕ, Ленин проспекчĕ, 11-мĕш çурт.

Телефонсем: тĕп редактор – 2-11-10, обществăпа политика, экономика пурнăçĕн тата çырусен пайĕсем – 2-14-05, яваплă секретарь тата наборпа верстка пайĕ – 2-13-10, бухгалтери – 2-15-64. Электронлă почта: smi11@cap.ru